Хурчка та тытма пултарать сана. Мĕншĕн эсĕ çак тертсене куратăн? Мĕн илĕртет сана сивĕ çĕре?

— Тăван çĕршыв... — хуравланă карăш.

В. Сухомлинский.



**Предложенисем туса çыр.**

| | | |
|---|---|---|
| 1) Автан ... . | | какалать |
| 2) Хур ... . | | авăтать |
| 3) Вăкăр ... . | | макăрать |
| 4) Ача ... . | | мĕкĕрет |

**Предложенисенчен калав йĕркеле.**

Симĕс курăк çĕкленет.
Хĕвел хĕртсе пăхать.
Юр ирĕлсе пĕтрĕ.
Çуркунне çитрĕ.



**Иван Яковлевич Яковлев.**

Чăваш çырулăхне йĕркелесе яракан çын Иван Яковлевич Яковлев пулнă. Вăл чăваш ачисем валли букварь çырса кăларнă. Унтанпа çĕр çирĕм çул ытла иртрĕ ĕнтĕ. Чăваш халăхĕ хăйĕн чаплă ывăлне манмасть.

## ЯКОВЛЕВ БУКВАРĔНЧЕН.

**Сармантей.**

Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă тет. Шăши пынă та ăна хўрипе çапса çĕмĕрнĕ. Сармантей те йĕрет тет, сарă чăххи те какалать тет...

? Эсĕ ку юмаха илтнĕ-и? Малаллине аса илсе каласа пар.

ю
у


**Кирлĕ сас паллисем ларт.**

1) Асламăшĕ .мах каласа парать.
2) Ван.кпа Мар.к тимлĕ итлеççĕ.

## Çуркунне.

Çуркунне хĕвел хĕртсе пăхать. Тулта ăшă. Çил вĕрмест. Çӳлте тăрисем юрлаççĕ. Юр ирĕле-ирĕле кăшт анчах юлчĕ. Урамра шыв чăл-чăл-чăл! юхса выртать.

Эпир ачасемпе хăма татăкĕсенчен пĕчĕк кимĕсем турăмăр. Хытăрах юхакан пĕр шырлана ятăмăр. Хамăр: «Камăн иртет! Камăн иртет!» — тесе кимĕсем хыççăн чупатпăр.

Çапла чупса пынăçемĕн эпĕ хам умра мĕн



пуррине те курман. Шыв лупашкине лап! кӗтӗм ӳкрӗм. Кӗпе-йӗм йӗп-йӗпе! Сивӗ, шăнтăм хам!

Кӗпе-йӗм улăштарас тесе эпӗ киле чупса кайрăм.

— Ăҫта йӗпетрӗн? Епле йӗпетрӗн? — тӗпчеме пуҫларӗ анне.

Эпӗ тӳррипе каласа патăм.

— Ҫук сана кӗпе! Кай, кăмака ҫине улăхса лар! Ӳлӗм умна-хыҫна чипер пăхса ҫӳре! — терӗ аннем.

Шывăн турачӗ ҫук теҫҫӗ.



**Предложенисем йӗркелесе ҫыр.**

1) Хӗвел, хӗртсе, ҫуркунне, пăхать.
2) Ăшă, тулта.
3) Ҫурхи, шыв, хушшинче, урам, юхать.
4) Кимӗсем, эпир, турăмăр.

**Ваттисен сăмахӗсем.**

Шывран типпӗн тухма ҫук.
Шыв теме те ҫӗмӗрӗ.

 

## Чӑваш халӑх сӑвӑҫи.

Константин Васильевич Иванов — чӑвашсен чаплӑ сӑвӑҫи. Унӑн «Нарспи» кӗнекине халӑх юратса вулать. Ӑна вырӑсла, тутарла тата ытти чӗлхесене куҫарнӑ.

К.В. Ивановӑн пултарулӑхӗ нумай енлӗ пулнӑ. Вӑл ялти шкултах ӳкерчӗксем тума юратнӑ, сӑвӑсем ҫырнӑ.

Каярахпа Константин Иванов Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗреннӗ, ӗҫленӗ. Кунта вӑл И.Я. Яковлева пулӑшнӑ, чӑвашла букварь валли ӳкерчӗксем тунӑ.



### Кирлӗ сӑмахсем хушса ҫыр.

| | |
|---|---|
| 1) Анюк ... ялӗнче пурӑнать. | Шупашкар |
| 2) Аппӑшӗ ... хулинче вӗренет. | Кинчер |
| 3) ... варринче утравсем пур. | Атӑл |



**Сентти.**

Чипер ача Сентти пур,
чупса ҫӳрет урамра.
Кĕвентине утланса
ача вылять лашалла.
Аслă урам тăршшĕпе
чиксĕр тусан кăларать,
хура чикан пек хура
каҫпа киле таврăнать.
Чипер ача Сентти пур,
чупса килет лашипе,
хăйĕн пĕчĕк чĕлхипе
пакăлтатать инкĕшпе.

К. Иванов.



**Сыпăксем хушса сăмахсем ту.**
Сĕ..., хĕ..., ав..., ар..., ал..., ме..., чĕ... .



## Чӗкеҫ.

Чӗкеҫ, чӗкеҫ, чӗкеҫӗ,
кунӗпе вӗҫсе ҫӳрет вӑл,
пӗртте канма пӗлмест вӑл,
шӑна-пӑван пуҫтарать,
чӗпписене тӑрантарать.

К. Иванов.



**Предложенисене уйӑрса ҫыр.**

Ҫуркунне ҫитрӗ кайӑксем ӑшӑ енчен вӗҫсе килчӗҫ вӗсем васкаса йӑва ҫавӑраҫҫӗ.



**Пӑнчӑсем вырӑнне кирлӗ сӑмахсем ларт.**

Хӑлат, кӗпшӗл, тӑри — ... . Ҫӗмӗрт, йӑмра, юман — ... . Ҫеҫпӗл, серте, пултран — ... .
Ҫӑраҫҫисем: йывӑҫсем, кайӑксем, ӳсентӑран.





**Виççĕмĕш космонавт.**

Андриян Григорьевич Николаев — виççĕмĕш лётчик-космонавт. Совет Союзĕн Геройĕ ятне вăл икĕ хут илнĕ. Хăйĕн ытти космонавт тусĕсем пекех, Андриян — хăюллă çын.

Чăваш ачисемшĕн Андриян Николаев уйрăмах çывăх. Вăл пирĕн ентеш-çке!

Паттăр космонавтăн тăван ялĕ— Шуршăл.

Шуршăл хитре вырăнта вырнаçнă. Ял урамĕсем тирпейлĕ, ешĕл йăмраллă. Ял çумĕпех Çавал шывĕ юхса иртет.

Андриян Николаев вĕреннĕ Шуршăлти шкулта халĕ музей. Музейра космонавт вĕреннĕ класс, вăл ларнă парта пур. Шуршăлти колхоз та космонавт ячĕпе хисепленет.

Юхма Мишши.

## Ҫĕнтерӳ кунĕ.

Ҫур ĕмĕр ытла каялла пирĕн ҫĕршывăн нумай хулипе ялĕ ҫиййĕн вăрҫă кĕрлесе иртнĕ. Фашистла Германи халăхсене чура тăвасшăн пулнă. Фашистсем тĕнчере «ҫĕнĕ йĕрке» тума шут тытнă.

Тăвата ҫул пынă Тăван ҫĕршывăн аслă вăрҫи. Вăл ҫав тери хăрушă та йывăр пулнă. Нумай хулапа ял ишĕлнĕ, ҫунса кĕлленнĕ.

Вăрҫăра нумай ҫын вилнĕ, аманса сусăрланнă. Вăрҫа пула нумай ватă-вĕтĕ, ача-пăча тăлăха юлнă. Халăх ҫав тери пысăк хурлăх, нуша тӳснĕ.

Ирĕклĕхшĕн кĕрешекен халăхсем фашистсене ҫĕнтернĕ-ҫĕнтернех.

Тăванла ытти халăхсемпе танах чăвашсем те вăрҫăра паттăррăн ҫапăҫнă.

Ҫак хăрушă вăрҫăра ҫĕнтернĕ ятпа ҫу уйăхĕн 9-мĕшĕнче ҫулленех Ҫĕнтерӳ кунне паллă тăваҫҫĕ.



### Предложенисене уйăрса ҫыр.

Тăван ҫĕршывăн аслă вăрҫи тăвата ҫул пынă вăрҫăра чăвашсем те паттăррăн ҫапăҫнă нумайăшĕ киле таврăнайман.



**Чап монуменчĕ.**

Шупашкарта, Атăлăн çӳллĕ çыранĕнче, çамрăк парк ешерет. Ун варринче капмар палăк — Чап монуменчĕ. Ку палăка Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче çĕнтернĕ ятпа лартнă.

Çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче кунта çулленех халăх нумай пухăнать. Çынсем Çĕнтерӳ кунне уявлама таçтан-таçтан та килеççĕ.

Палăк умĕнче сӳнми вут — асăну вучĕ çунать. Çынсем палăк патне чечек кăшăлĕсем хураççĕ. Вĕсем вăрçăра вăхăтсăр вилнисене асăнса пуç таяççĕ.

? Сирĕн ялта вăрçăран килмен салтаксене асăнса лартнă палăк пур-и?
Вăрçăра пуç хунă паттăрсене асăнса эсир çав палăк патне чечексем хуратăр-и?

## Пĕртăван паттăрсем.

Муркаш районĕнчи Исетерккĕ ялĕнчи Татьяна Николаевнăпа Алексей Илларионович сакăр ывăл пăхса ӳстернĕ. Вĕсем саккăрăшĕ те Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă.

Иван вăрçăн пĕрремĕш кунĕнчех пуçне хунă. Шăллĕ вилнине пĕлсен Кĕркурипе Александр хăйсен ирĕкĕпе фронта кайнă. Хĕрӳ çапăçура Кĕркурин пурнăçĕ те татăлнă. Вилнĕ хыççăн ăна Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.

Якур пĕр çапăçура тăшман дзотне хăй ӳчĕпе хупланă. Павăл та Тăван çĕршыва хӳтĕлесе вилнĕ. Фролпа Родион вăрçăра йывăр аманнă. Вĕсем те вăхăтсăр çĕре кĕнĕ.

Александрпа Михаил та вăрçăра паттăр çапăçнă.

Сакăр паттăр ятне ял çыннисем яланах асра тытаççĕ. Ялти пĕр урама Алексеевсен ятне панă. Урам вĕçне паттăрсен амăшне асăнса палăк лартнă.



### Çырса ил.

Пире вăрçă кирлĕ мар,
миршĕн пурте кар тăрар!



## Пĕрчĕ.

Атте сĕтел умĕнчи пукан çинче ларать. Эпир — сĕтел хушшинче. Апатланатпăр. Пурсăмăр та тирпейлĕ пулма тăрăшатпăр. Ванюк шăллăм çеç тăп ларма пĕлмест. Вăл куркинчи сĕтне тăкнă, çăкăрне тĕпретнĕ.

— Эсĕ, Ванюк, хăçан тирпейлĕрех пулăн? — терĕ атте. — Çăкăра ун пек ан тĕпрет. Çăкăр вăл пĕрчĕрен пулать. Пĕр пĕрче хĕрхенме пĕлмен çын çĕр пĕрче хĕрхенми пулать.

Ванюк вăтаннипе хĕрелсе кайрĕ. Вăл васкасах тĕпренчĕксене пĕр çĕрелле пуçтарчĕ.

Илпек Микулайĕ.



**Сыпăксем хушса сăмахсем ту.**

Çă... , пĕр... , шăл... , кур... , пу... , сĕ... .



## Пӳлĕмре.

Асатте канмашкăн выртрĕ
кăнтăрла кравать ҫине,
кăшт шăпрах пулма вăл ыйтрĕ —
чартăм пуканесене.

Калаҫаҫҫĕ ҫепĕҫ саслăн,
шавламаҫҫĕ вĕсем тек,
кĕтесре кушак ăнланнăн
мăрлатать пĕр сассăр пек.

Эп хуллен юмах пуҫларăм,
ман тавра пуканесем...
Асаттеҫĕм, кан пĕр ҫаврăм,
шăппăн калăп юмахсем.

А. Ильин.



**Ҫывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем туп.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| пĕчĕк | лайăх | тĕттĕм | инҫе |
| аякра | тĕксĕм | аван | вĕтĕ |



## Пĕрремĕш пан улми.

Алёна пӳрт умне икĕ улмуççи лартрĕ. Пĕрине — амăшĕ, теприне — асламăшĕ ячĕпе.

Пĕр çул шăварчĕ улмуççисене хĕр ача, икĕ çул... Виççĕмĕш çулхине амăшĕн улмуççийĕ çинче пĕртен-пĕр чечек çурăлчĕ. Унтан пĕртен-пĕр пан улми тĕвĕленчĕ, кĕçех пиççе çитрĕ. Алёна амăшĕн улмуççийĕ çинчи пан улмине татса илчĕ. Ăна çурмаран касса пĕчĕк турилкке çине хучĕ.

— Анне, асанне, — терĕ вăл, — пан улми çийĕр, вăл сирĕн улмуççи çинче çитĕннĕ. Пан улмийĕ тутлă пултăр.

В. Сухомлинский.

## Хама çеç, тен, хăналас...

Тупрăм виçĕ çĕр çырли.
Чухлăр: татрăм кам валли?
Пĕрне парас Кирлене,
чунтан савнă пиччене.

Теприне — Кулинене,
кӳршĕ ял хĕр ачине.
Виççĕмĕшне — Марука,
хамăн пĕчĕк йăмăка.



Чим-ха, кун пек пайласан
кӳренмест-ши шăллăм ман?
Пăшăрханмĕç-ши атте
тата ватă асатте?

Урăхла, тен, шухăшлас—
хама кăна хăналас...

П. Çăлкуç.



**Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсене туп:**

| | | |
|---|---|---|
| ăшă | шăрăх | пысăк |
| сулхăн | сарлака | хăвăртрах |
| анлă | ерипен | капмар |
| хуллен | сивĕ | часах |



**Хăйсемех.**

Пĕррехинче Мишук амăшĕ киле таврăнсан шалт тĕлĕннĕ.

— Мишук, велосипед урапине епле аркатрăн?

— Анне, вăл хăех арканчĕ.

— Кĕпӳ тата мĕншĕн çурăк сан?

— Аннеçĕм, вăл хăех çурăлчĕ.

— Хăрах пушмаку ăçта тата? Çухатрăн-им?

— Вăл хăех таçта çухалнă.

— Вĕсене кăштах вĕрентсе илер пуль, — тенĕ амăшĕ ывăлне итленĕ хыççăн.

— Мĕнле?

— Питĕ ансат, — хуравланă амăшĕ. — Акă мĕнле.

Енчен те вӗсем хӑйсемех ҫӗмӗрӗлме, ҫурӑлма, ҫухалма пӗлеҫҫӗ пулсан, халӗ хӑйсемех тӳрленччӗр, ҫӗленччӗр, тупӑнччӑр. Эпир вара санпа, Мишук, пӗр шухӑшсӑр кӗтсе ларӑпӑр.

Мишук ҫӗтӗк кӗпипех ҫӗмӗрӗлнӗ велосипечӗ ҫумне ларнӑ та шухӑша кайнӑ.

Е. Пермяк.

? Мишук мӗншӗн шухӑша кайнӑ?



**Натали кӗпе тӗрлет.**

Натали кӗпе тӗрлет.
  Кам валли
ҫав тери хитрелет
  Натали?
Тап-таса юр евӗрлӗ
  шур пире
хӗрлӗ, симӗс ҫиппеле
  вӑл тирет.
Сарӑпа сенкер хушать
  тӗлӗпе.
Ку хӗвел пек курӑнать,
  пӗлӗт пек.

П. Хусанкай.



## Килнӗ чухне илӗпӗр.

Ленӑпа асламӑшӗ кӳршӗ яла каяҫҫӗ. Асламӑшӗ йӑтнӑ ҫӗклем самаях пысӑк. Темиҫе хутчен те канса илкелерӗҫ вӗсем. Асламӑшне тем пекех пулӑшӗччӗ Лена, анчах пӗчӗкҫке-ха вӑл. Ҫӗклеме йӑтса пӑхрӗ те вырӑнтан та хускатаймарӗ. Пурпӗрех асламӑшне пулӑшмалли мел шыраса тупрӗ хӗр ача.

— Асанне, атя ку япаласене ҫул ҫине лартса хӑваратпӑр. Таврӑннӑ чухне илӗпӗр, — хӗпӗртесе пӗлтерчӗ вӑл.

Ю. Силэм.



### Предложенисене уйӑрса ҫыр.

Манӑн пӗчӗк йӑмӑк пур вӑл маттур хӗр ача вата асаннене пулӑшать.

## Сăпка юрри.

Упа кĕчĕ шăтăкне,
— Çывăр, — терĕ çурине.
Тилĕ кĕчĕ йăвине,
çывăратрĕ пепкине.

Эс те, шăллăм (йăмăк), кусна хуп,
кусна хуп, кусна хуп...

П. Эйзин.

## Сехет.

— Шăк-шак! Шăк-шак! —
ерипен шаккать сехет.
— Шăк-шак! Шăк-шак! —
вăл куса хупма сĕнет:
— Лăпкă çывăр ăшăнса,
тĕлĕкре те савăнса.
Шăк-шак!

? Санăн пĕчĕк йăмăку е шăллу пур-и?
Вăл мĕн ятлă?
Эсĕ ăна пăхатăн-и?



**Çырса ил. Кирлĕ çĕрте çемçелĕх палли ларт.**

Гал.ăн пĕчĕк шăллĕ пур.
Галя ăна питĕ юратат. .
Вăл унпа вылят. .



**Кумалякпа туслашни.**

Кумаляк вăл — кăткă. Пирĕн пӳрт çумĕнче пахчара пурăнать. Виçĕм кун урана шăрпăк кĕртсе ятăм та пусма вĕçĕнче çапла шăрпăк кăларса ларатăп. Пăхатăп, картлашка хăми тăрăх пĕр Кумаляк чупать. Эпĕ ăна тӳрех пĕлтĕм Кумалякне. Ма Кумаляк-и? Темме. Таçта илтнĕ эпĕ вăл сăмаха, тем тени вăл — пĕлместĕп. Хам пуç ăссĕн çак кăткă пуль терĕм. Чăнах та çавă пулнă. «Кумаляк», — тесе чĕнтĕм те, чарăнса ман çине кăн-н! пăхрĕ. Кайран калаçса кайрăмăр вара. Вăл мана хăй çинчен каласа парать, эпĕ — хам çинчен.

Кумаляксен килĕ питĕ пысăк. Кăткăсем нумаййăн пурăнаççĕ. Эпĕ курнă вĕсене: эх, чупаççĕ. Тем пысăкăш япаласене сĕтĕреççĕ.

Кумаляк вăл манашкал ача та, унпа выляма никам та ерçмест, çитĕннисем хăйсемпе ертмеççĕ. Çавăнпа та малтанхи хут курсанах

манран пӗр чӗптӗм те хӑрамарӗ вӑл. Ура туни тӑрӑх чупса хӑпарчӗ те чӗркуҫҫи ҫине ларчӗ.

Ним те ҫыртмасть. Кӑткӑсем вӗсем хӑйсен кил-ҫуртне аркатма тытӑнсан кӑна питӗ хытӑ тарӑхса каяҫҫӗ, вара ҫыртаҫҫӗ.

Тарӑхмасӑр. Эпӗ хам та ӗнер лаҫ ҫумӗнче пӳрт турӑм. Кукӑль пӗҫерме тесе тӑм илме кайрӑм ҫеҫ, Максӑм Вани ман пӳрте йӑлт тустарса тӑкнӑ. Кайран пахча алӑкӗ айӗнчен пӑхса кулать манран. Хӑйӗн хырӑмӗ ҫара тусан. Пиччӗшӗ пур та, ҫӳрет иртӗхсе. Манӑн кӑна Кумаляксӑр пусҫне никам та ҫук. Анне хулана кайнӑ. Паян, ыран, тепӗр кун пулсан тин килет. Кӗтетӗп, кӗтетӗп. Атте каҫалапа килет-ха, анчах ывӑнса таврӑнать те — манпа вылямасть. Пӗтӗм ӗмӗр ҫак Кумалякпа вылясах иртсе каять ӗнтӗ.

Хӗвел ансан Кумаляк ҫывӑрма вӗтӗртеттерет. Тӗттӗмленсен вӗсем пӳрт алӑкне чӑнкӑр-чӑнкӑр питӗрсе лартаҫҫӗ тет те кӗртмеҫҫӗ тет.

Петӗр Яккусен.



**Ҫывӑх пӗлтерӗшлӗ сӑмахсене туп.**

| | |
|---|---|
| пӗчӗк |васкать |
| шултра | вӗтӗ |
| хыпаланать | пысӑк |

## Ырпи.

Кĕшĕл-кĕшĕл хур чĕппи.
Эх, епле хитре чуппи!
Хăшсем курăк сăхаççĕ,
хăшсем шыва чăмаççĕ.
Вĕтĕр-вĕтĕр-вĕтĕрпи,
хур чĕппи шутлать Ырпи:
— Пĕрре, иккĕ, вуннă,
виççĕ,
тăххăр, саккăр, пиллĕк,
çиччĕ!
Ăна пиччĕш тӳрлетет:
— Тĕрĕс мар шутлатăн, —
тет, —
пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă,
пиллĕк, улттă, çиччĕ,
саккăр!
Пурĕ сакăр хур чĕппи—
шутлама вĕрен, Ырпи.



А. Ыхра.



**Ваттисен сăмахĕсене вĕçле.**

Хур усракан хуранĕ ... .
Хур хыççăн кайнă чăх пуççăр ... .

## Улине тӗлӗнет.

Пӗррехинче пиллӗкри Улине ашшӗпе пӗрле вырӑс ялне кайнӑ. Урамра пӗчӗк ачасем вылянӑ, хӗрсе кайса тем ҫинчен калаҫнӑ.

Улине шалт тӗлӗннӗ.

— Атте, пӑх-ха, хӑйсем пӗчӗк ҫеҫ, вырӑсла лайӑх пӗлеҫҫӗ. Манӑн та вӗренесчӗ.

Инҫех те мар ӗне ферми пулнӑ.

Улине ӗнесем макӑрнине илтнӗ те:

— Ӗнисем чӑвашла макӑраҫҫӗ тата, — тенӗ.

М. Сакмаров.

## Маринепе Кампур.

Маринен Кампур ятлӑ йытӑ пур. Хӗр ача ӑна питӗ юрататъ. Унпа час-часах вылятъ.

— Ку «а», ку «в». Вула, Кампур,— хушатъ Марине.

— Ав! Ав! — вӗрсе илет Кампур.

— Ку «ӑ», ку «ӗ». Кампур, вула, — хушатъ каллех Марине.

Анчах Кампур шарламастъ. Вӑл ку сас паллисене пӗлмест ҫав.

И. Шухши.

? Сирӗн килте йытӑ пур-и?
Вӑл мӗнлерех?

## Сывлăм шывĕ.

Улăхра пин тĕрлĕ çăлтăр
мерчен евĕр йăлкăшать.
Чĕлтĕр-чĕлтĕр, йăлтăр-йăлтăр
сывлăм шывĕ ялтăрать.

Сывлăм шывĕ питĕ капăр,
йывăççем те тап-таса.
Чечеке те, курăка та
вăл ирех каять çуса.

В. Эктел.

## Уçланкăра.

Епле аван çулла вăрманта! Сывлăш уçă.

Акă уçланкă. Кунта темĕн тĕрлĕ чечек те ӳсет. Уçланкăн пĕр вĕçĕнче йăрăс пӳллĕ хырсем кармашаççĕ. Тепĕр вĕçĕнче шурă хурăнсем ӳсеççĕ. Юнашарах — шапăлти ăвăссем.

Вăрманта куккук авăтни, кайăксем шĕнкĕлтетни илтĕнет.

С. Элкер.



**Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем ларт.**

Хутăш вăрманта ... хурăнсем, ... хырсем, ... ăвăссем ӳсеççĕ. Кунтах ... юман та пур. Йывăççем айĕнче ... курăк ӳсет.

## Пăрчăкан.

— Пăрчăкан, пăрчăкан,
ма çунатна пăчăртан?
Тăрăс-тăрăс сиккелен,
хӳрӳне пĕрмай силлен,
мĕн пулнă вара паян?

— Эппинех, сана калам:
лупас хыçĕнче — йăвам,
йăвара — тăват пепкем,
тăваттăш те тĕкленмен.
Эс илесрен чунăм çук,
эс тивместĕн пуль, Васук?

— Эх, пăрчăкан, пăрчăкан,
эс ахалех пăчăхан!
Кайăк чĕппине Васук
нихăçан та тивес çук.

Стихван Шавли.



### Кирлĕ сăмахсем хушса çыр.



| | |
|---|---|
| 1) ... шăнкăрч йăви тăвать. | тăри |
| 2) Тӳпере ... юрă шăрататъ. | ача |
| 3) ... шăши тытать. | куккук |
| 4) Вăрманта ... авăтать. | тăмана |

## Упа.

Эпĕ упа-утаман,
ик урапа утакан,
пур кайăкран хытăрах
мĕкĕрттерсе улакан.

Çăва тухсан вăрманта
вĕллесене ватакан,
тутлă пылне çиекен,
ĕнесене тытакан.

Н. Шелепи.

? Упа çинчен эсĕ тата мĕнле сăвă пĕлетĕн? Ытти чĕр чунсем çинчен сăвăсем пĕлетĕн-и?



**Предложенисене урăхлатса çыр.**

Тĕслĕх. Упа пыл юратать. — Упасем пыл юратаççĕ.

Мулкач йăва çавăрмасть. Вăл ирĕке юратать. Çавăнпа унăн çăмĕ яланах таса.

## Арçури.

Пĕррехинче вăрмана хурăн çырли татма кайрăмăр. Çул çинче Павлик хăйне аслашшĕ çамрăк чух вăрманта арçурипе çапăçни



çинчен каласа панине аса илчĕ. Хăлхасене чăнк тăратсах итлерĕмĕр ăна.

Вăрмана кĕрсен Сантăр пирĕнтен уйрăлчĕ.

— Эпĕ хам пĕлнĕ вырăна каятăп, — терĕ.

Эпир сĕвек тăвайккинче юлтăмăр. Лапка-лапка хурăн çырли! Татрăмăр та, çирĕмĕр те.

Маруç тата пит çăмартине çырла шывĕпе хĕретрĕ:

— Эп çырлара пулнине пĕлччĕр, — кулчĕ вăл.

Çил тухрĕ. Вăрман çийĕн пĕлĕтсем курăнчĕç. Эпир киле кайма пуçтарăнтăмăр.

— Тс-с-с... — пире шăп пулма асăрхаттарчĕ Павăл.

Çырма леш енче ача макăрнă сас илтĕнчĕ. Пирĕн паталла çывхарса пычĕ вăл. Ак

тамаша! Мĕн ку? Сантăр! Шĕшкĕ тĕммисем хушшинчен вирхĕнсе тухрĕ ача. Хăйне тăрукках курсан хăраса каймалла, пичĕ юнпа вараланнă, кĕпин хăрах ҫанниййĕ ҫурăлнă. Хуп пуракне те ӳкерсе лапчăтнă тата.

— Мĕн пулчĕ? — ыйтрăмăр эпир.

— Арҫури! — аран сывлăш ҫавăрса каларĕ Сантăр.

— Ăҫта?

— Ҫавăнта! — уҫланкă енне аллипе сулчĕ вăл.

Пирĕн пурин те арҫурие ҫывăхран курас килчĕ. Сантăр хыҫҫăн вар вĕҫĕ урлă каҫрăмăр, уҫланкă хĕррине тухрăмăр.

— Ăҫта сан арҫури? — ыйтрĕ Маруҫ.

— Ҫакăнтаччĕ. Ак ҫак йывăҫа тĕртсе ӳкерчĕ, — мăкăртатрĕ пирĕн тус мăкпа витĕннĕ ҫĕрĕк ҫăкана кăтартса.

Ҫил тулашрĕ. Йывăҫ тăррисем хумханчĕҫ. Ҫывăхра пысăк хăрăк турат шатăрт! хуҫăлса ӳкрĕ. Тинех вăрманта ҫил аташса ҫӳренине тавҫăрса илчĕ Сантăр.

Н. Карай.

? Ачасем ăҫта кайнă?
Ҫанталăк мĕнле улшăннă?
Сантăра мĕн хăратнă?

## ХАЛĂХ CĂMAXЛĂXĚНЧЕН.

### Шăши ăçта?

— Шăши ăçта?
— Шăтăкра.
— Шăтăкĕ ăçта?
— Шыв тулнă.
— Шывĕ ăçта?
— Вăкăр ĕçсе янă.
— Вăкăрĕ ăçта?
— Кĕтӳре.
— Кĕтĕвĕ ăçта?
— Улăхра.
— Улăхĕ ăçта?
— Йăлăмра.




### Мулкач.

Лапка-лапка юр çăвать,
мулкач сикет, йĕр тăвать.



**Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сыпăксем лартса çырса ил.**

Кĕтӳ улăх... çӳрет. Кĕтӳ... ĕнесемпе пăрусем, сурăхсемпе качакасем пур. Кĕтĕве кĕтӳ... пăхать.

**Тăри юрри.**



Тăр-тăри, тăр-тăри,
ирпе ирех тăтăр-и,
пăри пĕрчи акрăр-и,
пăри пăтти çакрăр-и,
сарă çуне сапрăр-и,
çиме мана лартрăр-и?

**Пӳрне юмахĕ.**

— Атьăр, кăвас хурар! — тет пуç пӳрне.
— Çăнăх çук, — тет шĕвĕр пӳрне.
— Кивçен илер! — тет вăта пӳрне.
— Илсен парасси! — тет ятсăр пӳрне.
— Çиес те тарас! — тет кача пӳрне.



**Предложенисем йĕркеле.**

| | | |
|---|---|---|
| Нина | карап | савалать |
| Шура | кĕнеке | ӳкерет |
| Рома | хăма | вулать |

**Куракпа чĕпписем.**

Курак калать тет:

— Ах, чĕппĕмсем хура пулсан та хамăнах.

9*

## Çерçи.

Çерçи шыва кӗрсе тухсан тăмаланнă та хăй мӗлки çине пăхса:

— Ах анчах, çут тӗнчере манран пысăк кайăк пур-ши? — тесе тӗлӗнет тет.

## Вăрăм туна.

Вăрăм туна шăрăх çанталăкра мухтанать тет:

— Вăрмантан уя тухса вӗçӗттӗм те, пӗр пăт çăвăм шăранасран хăратăп, — тесе калать тет.

## Кашкăра ан шан.

Тилӗ мулкача юлташа чӗнчӗ тет. Тытăнчӗç тет иккӗшӗ вутă касма. Ĕçленӗ чух мулкач ăнсăртран урине хуçрӗ тет. Вăрман тухтăрӗ кашкăр пулнăран тилӗ мулкача ун патне леç-се хăварчӗ тет. Тепреren тилли кашкăр пат-не пычӗ тет те:

— Мулкача сыватрăн-и, ӗнтӗ киле илсе ка-ясчӗ, — тесе калать тет.

— Тахçанах сыватрăм, тирне илсе кайма пултаратăн, — терӗ тет кашкăр. Мулкач тир-не тухса пачӗ тет.

## Кам мĕне хапсăннă.

Пĕр ҫыннăн виҫĕ ывăл пулнă. Ашшĕ вилес умĕн ачисене хăй патне чĕнтерет те ҫапла ыйтать:

— Кама мĕн кирлĕ, ăс кирлĕ-и е укҫа кирлĕ-и?

Аслисем иккĕшĕ ашшĕнчен нумайрах укҫа пама ыйтаҫҫĕ. Чи кĕҫĕнни ăс ыйтса илет.

Ашшĕ вилсен ҫаксем уйрăмшар пурăнма пуҫлаҫҫĕ. Укҫа илсе юлнисем ăспа пурăнма пĕлмесĕр мĕнпур укҫине салатса пĕтереҫҫĕ те ҫука юлаҫҫĕ.

Ăс ыйтса илнĕ ывăлĕ ăспа пурăнса халĕ те пулин аван пурăнать тет.



**Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сас паллисем лартса ҫыр.**

Аслă ывăлĕсем укҫана, мула хапсăннă. Кĕҫĕнни мула хапсăн... . Аслисем ашшĕнчен укҫа пама ыйтнă. Кĕҫĕн ывăлĕ укҫа ыйт... , ăс пама ыйтнă.

! **Ваттисен сăмахĕ.**

Вĕреннине (ăса) йăтса ҫӳреме кутамкка кирлĕ мар.



## Çĕвĕç.

Пуранна тет ĕлĕк-авал пĕр ялта Йăван мучипе карчăкĕ. Вĕсен виçĕ хĕр ӳснĕ тет. Виççĕшĕ те сăнĕпе питĕ чипер пулнă, анчах ĕçлеме юратман.

Пĕррехинче çаксем аслă хĕрĕ валли кĕрĕк çĕлетме çĕвĕçе кĕртнĕ. Тепĕр кунне ирпе аслă хĕрĕ урай шăлчĕ тет те çӳппине кĕтесе пухса хучĕ тет. Кăнтăрла вăталăх хĕрĕ урай шăлчĕ тет. Çӳппине амăшĕ тухса тăкасса шанса вăл та кĕтесех тултарчĕ тет. Каçхине кĕçĕн хĕрĕ те çӳппе каллех çавăнтах купаларĕ тет.

Çакна кĕрĕк çĕлекен çĕвĕç сăнаса ларчĕ тет. Каçхине аслă хĕрĕ апат пĕçерне чух тăвар яма тăчĕ тет. Хайхи çĕвĕç унран пĕр ывăç

тăвар ыйтса илчĕ тет те кĕтесри çӳп купи çине сапма тапратрĕ тет.

— Мĕншĕн çӳп çине тăвар сапатăн? — ыйтрĕ тет хĕр çĕвĕçрен хытă тĕлĕнсе.

— Тăварламасан çĕрет вăл! — хуравларĕ тет çĕвĕç кулса.

Виçĕ хĕр вăтаннипе хăмач пекех хĕрелсе кайрĕç тет. Сиксе тăчĕç те кĕтесри çӳппе çĕр хутах тасатрĕç тет. Çавăнтан кайран виç кун-та пĕрре урай çума тытăнчĕç тет.

? Кил хуçисен хĕрĕсем урай шăлсан çӳппе ăçта купаланă?
Çĕвĕç çӳп купи çине мĕншĕн тăвар сапнă?
Йăван мучипе карчăкĕн хĕрĕсем çинчен мĕн калама пулать?
Çĕвĕç сан шутпа мĕнлерех çын? Мĕншĕн çапла шутлатăн?



**Тупсăмне туп.**

Хурăн тăрри хумханать, хура халăх пуç-тарăнать.

(Урай шăлни.)



**Ваттисен сăмахĕсене вĕçле.**

Ĕç апат ыйтмасть, вăл хăй ... .
Ĕçчен çынран ĕç ... .

## «Ăслă» ывăл.

(Пăлхар халăх юмахĕ.)

Пĕррехинче ашшĕ хăйĕн ывăлĕсене çапла каланă:

— Ыран аннĕр кукăль пĕçерессшĕн. Кам çийĕ? — тенĕ.

— Эпĕ! — кăшкăрса янă пĕр ывăлĕ.

— Кĕçех сысна пусатпăр. Ăна кам çийĕ?

— Эпĕ! — кăшкăрса янă çав ывăлех.

— Хур пусăпăр. Ăна кам çийĕ?

— Эпĕ, эпĕ! — кăшкăрнă çавскерех.

— Ыран хире сухана тухăпăр. Кам суха тăвĕ?

— Ялан эпĕ те эпĕ. Ан тив, ыттисем те мĕн те пулин туччăр, — тенĕ юлашкинчен вăлах.

? Эсĕ ĕçрен пăрăнма тăрăшаканран тăрăхласа кулакан тата мĕнле юмахсем пĕлетĕн? Каласа пар.

! **Ваттисен сăмахĕ.**

Ырă ут пуласси тихаран паллă. Ырă çын пуласси ачаран паллă.



## Кушак аҫипе ҫерҫи.

Пĕррехинче кушак аҫи хĕвел питтинче ăшăнса выртнă. Хайхискер ăшă та тутă пурнăҫпа киленсе куҫне хупса мăрлатнă. Сасартăк вăл юнашарах такам сассине илтет: «Чĕвик! Чĕвик!»

Куҫне уҫать те курать: валашка хĕрринче ҫерҫи ларать иккен. Темĕн сăхать вăл.

Кушак аҫи шартах сикнĕ. Вăл шăртне вирелле тăратнă.

Ҫерҫи валашка тăрăх сиккелесе ҫывăхах пырать. Кушак аҫи чалт! ҫеҫ сикет те ҫерҫие ярса тытать.

Анчах ҫерҫийĕ ватăскер пулнă. Ватă ҫерҫие хывăхпа улталаймăн!

— Чим! Чим! — тет вăл. — Эсĕ мана ҫиес-се ҫийĕн те, анчах аса ил-ха. Паян, ҫывăрса тăрсан, пит ҫурăн-и? Эсĕ куҫна та тасатман-



çке. Ăслă çынсем çывăрса тăрсан пит çăваççĕ, вара тин ĕçе пикенеççĕ.

— Чăнах та, пит çăваймарăм!— аса илнĕ хайхи кушак аçи.

Вăл чĕрнисене пытарать те çерçие вĕçертсе ярать. Унтан çăвăнма пикенет. Урине чĕлхипе йĕпете-йĕпете питне-куçне сăтăркалать. Çерçи пăхрĕ-пăхрĕ те пăр-р! турĕ тет.

Çав вăхăтранпа кушак аçи апат умĕн мар, апат хыççăн питне çăвать тет.

Ăна кура ытти кушаксем те апатлансан тин çăвăнаççĕ.



**Предложенисем йĕркелесе çыр.**

1) Кушак, тытма, шăши, юратать.
2) Çиет, вăл, те, сĕт.
3) Çăвать, хыççăн, çинĕ, кушак, питне.



## Хресченпе упа.

Пӗр хресчен вӑрмана вутта каять. Ӗçлесе ывӑнсан тунката çине канма ларать. Кӗтмен çӗртен ун патне упа тухать те мӗкӗрсе ярать:

— Эй, этем, атя иксӗмӗр тытӑçса пӑхар.

Пӑхать хресчен упа çине. Ытла та пысӑкскер вӑл— ӑçтан çыхлананн унпа.

— Тӑхта, малтан санӑн вӑйна тӗрӗслесе пӑхар,— тет ӑна хресчен.

Вӑл пуртӑ илет те тункатана варринчен çурать. Унта савӑл çапса лартать.

— Çак тункатана тяппупа туртса çур. Вара эсӗ чӑнах вӑйли курӑнӗ.

Упи шутламасӑрах тяппине хушӑка чикет. Хресчен савӑла çапать те кӑларать. Тунката



упа тяппине хĕстерсе хурать. Мĕкĕрсех ярать упа.

— Ну, мĕнле, кĕрешес шухăш пур-и? — кулать хресчен.

— Çук,— тет упа,— çыхланмастăп.

— Çапла çав. Вăйпа çеç мар, ăспа та çĕнтерме пулать, — тет хресчен.



**Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене туп.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| пысăк | тĕттĕм | кахал | хăюллă |
| хăравçă | ĕçчен | çутă | пĕчĕк |



**Предложенисем йĕркелесе çыр.**

| | |
|---|---|
| Хураçка | чĕпсене сыхлать. |
| Марине | шăши тытать. |
| кушак | ăслă йытă. |



## Икĕ шапа.

(Испан халăх юмахĕ.)

Икĕ шапа ăнсăртран хăйма чӳлмекне кĕрсе ӳкнĕ. Вĕсенчен пĕри çемçешкерех те шиклĕрех пулнă. Вăл кăштах ишкеленĕ те çапла каланă:

— Манран пурпĕрех ишсе тухасси пулмасть. Мĕскер пустуй тапаçланас? Путас та вилес!

Путнă вара вăл.

— Çук, — тенĕ тепри, — путма эпĕ кирек хăçан та ĕлкĕрĕп-ха. Ишем пĕтĕм вăй пĕтсе çитиччен...

Нумай иртнĕ-и вăхăт, сахал-и. Мĕн ку? Шапа хăй айĕнче хăйма мар, темĕнле хытă япала



пуррине туйнă. Пăхнă та хăй çу чăмăркки çинче ларнине курах кайнă.

Ише-ише шапа хăех çу ӳкернĕ иккен! Çакă çăлса хăварнă та ăна.

? Пурнăçра хăш шапи пек пулма тăрăшмалла? Мĕншĕн?



**Предложенисем йĕркелесе çыр.**

1) Павлуш, вулать, юмах.
2) Шура, кăмпана, кайнă, Машăпа.
3) парать, Нина, апат, чăхсене.



**Ваттисен сăмахĕсем йĕркеле.**

| | |
|---|---|
| Авăртсан-авăртсан ... . | ăста пулнă |
| Шăтăка лекме çăмăл, ... . | çăнăх пулать |
| Ӳркенмен ... . | тухма йывăр |

## Азбука.

Мĕн амак? Мĕн чĕмере?
Ӳкнĕ азбука ҫĕре!

Урине хыт мăкăлтанă
пысăк **М** сасă палли.
**И** кăштах ҫеҫ сусăрланнă,
хуҫăлнă-мĕн **Ж** алли.

**Ю** арканнă, тăлăх юлнă:
ун ҫухалнă урлашки.
**У** пачах хӳресĕр пулнă:
аякра ун татăкки.

Мĕскĕн **Ф** йăлт лучăрканнă:
вуласа пĕлеймĕн тек.
**Р** ӳксе ӳпне йăванна,
халь — ҫемҫелĕх палли пек.

**С** палла тупас тесессĕн
тинкерсемĕр **О** ҫине.
**А** тăна кĕрсе ҫитсессĕн
паллаймарĕ тус-йышне.

Ю. Тувим.



Учебное пособие

**Тамара Васильевна Артемьева**
**Михаил Константинович Волков**
**Леонид Павлович Сергеев**

**ЧУВАШСКИЙ БУКВАРЬ**

Под общей редакцией кандидата
педагогических наук **М.К. Волкова**

Редактор **Р.И. Крысина**
Художники **М.Ю. Николаев, И.В. Алексеев, П.Н. Сергеев**
Художественный редактор **О.П. Сергеева**
Технический редактор **Л.К. Егорова**
Компьютерная верстка **М.В. Филипповой**
Корректор **Н.Н. Маслова**

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93 — 95 6600. Подписано к печати 30.08.07. Формат 70х90 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Букварная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 10,53+0,29 форз. Уч.-изд. л. 11,07+0,41 форз. Тираж 8000 экз. Заказ № 1175. Изд. № 45.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Минкультуры Чувашии, 428019, Чебоксары, пр.И.Яковлева, 13.
Отпечатано в ООО «Чебоксарская типография №1», 428019, Чебоксары, пр.И.Яковлева, 15.

Аа Ӑӑ Бб В

Ёё Ĕĕ Жж Зз

Лл Мм Нн О

Ҫҫ Тт Уу Ӳӳ

Чч Шш Щщ ъ Ы

в Вв Гг Гг Дд Дд Ее Ее

з Зз Ии Ии Йй Йй Кк Кк

о Оо Пп Пп Рр Рр Сс Сс

ӱ Ӱӱ Фф Фф Хх Хх Цц Цц

ы Ыы Ь ь Ээ Ээ Юю Юю Яя Яя

Чăваш кĕнеке издательстви